С(Чув)
М29
29449

Любовь
МАРТЬЯНОВА

# Шурӑ юр юрри

Национальная библиотека ЧР
4-029449

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

Зак. 3541.

кф
К С(чув
М 29

Любовь
МАРТЬЯНОВА

# Шурă юр юрри

Сăвăсем

Кр

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1986

ББК 84. Чув 7—5
М 29

ПРОВ РЕНО
№

29449-чув

Чуваш.
Республиканская
БИБЛ
им. М. Горького

**Мартьянова Л. В.**

М 29 Шурă юр юрри. Сăвăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1986.— 64 с.

10 п., 1500 экз.

Любовь Мартьянова сăввисем тарăн шухăшлă та ăшă туйăмлă. Автор паянхи яшсемпе хĕрупраçăн таса кăмăлне, çутă ĕмĕтне асра юлмалла сăнарлать. «Шурă юр юрри» поэтăн виççĕмĕш кĕнеки.

**ББК 84. Чув 7-5**

М $\frac{4803010200 — 032}{М\ 136(03) — 86}$ 85 — 86

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1986 ç.

* * *

Хисеп те кирлĕ.
Пуç каçăртса çÿреме мар,
Ял хушшинче ялла пулма,
Ятлă çынна сăмах хушма
Хисеп те кирлĕ.

Телей те кирлĕ.
Саркаланса пурăнма мар,
Çак пурнăçа хитре тума,
Пур парăма туйса тăма
Телей те кирлĕ.

Хăват та кирлĕ.
Кăкăр çапса çÿреме мар,
Чун туртнине чăна хума.
Ăс хушнине туса пыма
Хăват та кирлĕ.

* * *

Хӑвалӑхри хӑва ҫинче ҫил ҫуралчӗ,
Куҫне уҫрӗ кӑмӑллӑн, кӑкӑр ачилле.
Шурӑ тӗтре айӗнче вӑл шуралчӗ,
Шӑрчӑк хыҫҫӑн иленсе сикрӗ ҫӗрелле.

Сар чечексем хушшинче вӑл саралтӑр,
Кӑвакартӑр кӑвак пӗлӗт хушшинче.
... Хура хӑрӑм мӑрйине ҫеҫ ан лартӑр,
Ан курӑнтӑр эпир тухнӑ ҫул ҫинче.

Хура ҫил вӗрсен — хура куҫҫуль тухать,
Янкӑр ҫут куна хупласа хурать.

## КИМӖ ТУНСӐХӖ

Кӑкарнӑ кимӗ тунсӑхне чунпа туятӑп:
Вӑл хашлатса илет хум ҫапнӑ майӑн.
Икӗ кӗсмен вара, ик вӑйсӑр алӑ майлӑн,
Выртать пӗр хусканусӑр.

Шап-шурӑ чарлансен хавaслӑ ыр сассишӗн
Вӑл антӑхса, асаплӑн, сасӑсӑр йӗрет.
Ӗмӗтӗнче ялан — ҫӳрес ҫулне йӗрлет
Вӑйсӑрлӑха пӑхмасӑр.

Ытла сенкер иккен чун туртнӑ вӗҫсӗрлӗх
Ӑш йышӑнман сив сӑнчӑр ҫеҫ чарать.
Ав, шанчӑк та ун умӗнче пуҫне таять
Сӑмах чӗнме хӑймасӑр.

Юсавсăр кимĕ тунсăхне чунпа туятăп,
Ик аллăма хуратăп ик кĕсмен çине.
Хăпартланса пăхса сап-сар хĕвел енне
Каятăп пăлханусăр.

Юсавсăр кимĕ тунсăхне чунпа туятăп:
Мĕн пуласса пĕлсех уç тинĕсе тухатăп.

## ЧĂВАШЛА

Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,
Шăпчăк та юрлать кунта халь чăвашла.
Сассăм, пин чĕлхеллĕ халăх хушшинче,
Янăрать хавассăн, уççăн, чăвашла.

Тĕлĕнсе пăхать-ха, тарăхать тăшман:
«Камсемех эсир,— тет,— калăр,
хăш йăхран?»
Çак чечеклĕ çĕр пин юрă тĕнчинче
Эп çуралнă. Пĕлĕр — ыр йăхран.

Сăпкари ача та кулчĕ чăвашла.
Хурăнпа йăмра та — кăмăллă йышра.
Ыр телей пилленĕ Аслă Çĕр çинче
Пурăнма çуралнă пурте пĕр йышра.

Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,
Шăпчăк та юрлать кунта, ав, чăвашла.
Пин чĕлхеллĕ туслă халăх хушшинче
Калаçса çӳретĕп эпĕ — чăвашла.

* * *

Эй, яра пар,
Яра пар,
Шуçтупаньпа,
Шур лашапа
Çитес çĕре
Çитсех курар,
Тăвас ĕçе
Тусах пăхар.
Шуçтупаньпа,
Шур лашапа...
Эй, яра пар,
Яра пар!

Эх, ачалăх,
Шух ачалăх,
Ытла инçе
Каймарăн-и,
Ытла нумай
Суймарăн-и?!
Çитес çĕре
Халь те çитмен,
Тăвас ĕçе
Халь те туман.
Эх, ачалăх...
Шух ачалăх...
Ытла инçе
Каймарăн-и,
Ытла нумай
Суймарăн-и?

* * *

Тĕрĕсрен тĕрĕсне эп калатăп:
Вăхăта — ыр Самантшăн мухтатăп.

Паянхи — йăлтăркка çутă кусçлă,
Ӳпкеленĕн сăнать Ĕнере.
Ыранхи вăл — хăех усçă чунлă...
Мĕн юлать эрнене, ĕмĕре?..

Емĕр ячĕ — малашлăхăн ячĕ —
Ĕнерхи, Ыранхи — йăлт унра.
Кашни çыннăн çунатлă Саманчĕ
Çăлтăр евĕр çиçет ман умра...

* * *

Тăнласам-ха эсĕ, тăнласам, тархасшăн,
Икĕ кăвакарчăн калаçать.
Чĕлхине эп вĕсенне халь ăнланасшăн.
Ыррине такам та ăнланать.

Ыррине кăна-и? Çук çав, усала та —
Кам-ха вĕсене пăтраштарать?..
Пурпĕрех вара — мĕскер кăна кала та —
Чун та, кус та тĕрĕснех курать.

Тăнласам-ха эсĕ, тăнласам, тархасшăн,
Икĕ кăвакарчăн калаçать...
Ман хаваслă кунăмшăн, паяншăн
Çутă ир калаçнăн туйăнать.

* * *

Пӳлӗм тулли хурлӑх пулчӗ.
Ют ҫын килчӗ, тӑван килчӗ —
Чун хурланчӗ — чармарӑм.

Пӳлӗм тулли савнӑҫ пулчӗ,
Ют ҫын килчӗ, тӑван килчӗ —
Сӑн ҫуталчӗ — чармарӑм.

Ҫичӗ ҫырма леш енчи икӗпите
манмарӑм:
Хурлӑхра та, савнӑҫра та хам
ҫывӑха ямарӑм.

* * *

Иккӗленсе пӑлан тинкерчӗ:
Тӗнче ҫине пӑхать вӑл тӗлӗнсе.
Тӗнчи пур — тинӗс пек силленчӗк,
Пурне те ӗненес-и тус тесе?

Ӗнер ҫеҫ мар-и-ха вӑл курчӗ
Юнланнӑ тӗмеске уй хӗрринче?
Тахҫан ун мӑшӑрӗ те пурччӗ,
Ҫухалчӗ вӑл ҫапла пӗррехинче.

Иккӗленме пурах сӑлтавӗ:
Пӗри усрать, тепри, ав, хур тӑвать.
Сип-симӗс тӗнчене, хӑй майлӑ,
Пин куҫ — пин тӗслӗ, тен, курать.

Иккĕленсе пăлан тинкерчĕ,
Йĕри-тавра пăхать вăл тĕлĕнсе.
Ак, ку енче — сип-симĕс çутă шанчăк,
Таçта лере — юнланнă тĕмеске.

## ÇИЛЛĔ ÇУМĂР

Çиллĕ çумăр,
Çиллĕ çумăр чалăшшăн çапать.
Тем калас пек,
Тем калас пек вĕçĕмсĕр çăвать.

Алтăр илсе,
Алтăр илсе тухас пуль.
Çумăр шывне,
Çумăр шывне пухас пуль.

Çав алтăра,
Çав алтăра çут çĕрĕ ярас.
Витĕр пăхса,
Витĕр пăхса, сан сăнна курас.

Çиллĕ çумăр,
Çиллĕ çумăр чалăшшăн çăвать.
Тем калас пек,
Тем калас пек алтăра çапать.

* * *

Ултавлă лăпкă вырăна сăнатăп.
Пĕлсех тăрап халь-халь мĕн пуласса.
Çут кӳлĕре шур акăшсем куратăп,
Сăртран анать сар тилĕ йăпшăнса.

Шухăшласа тăмастăп тек, чупатăп:
— Шур акăшсем, хăпарăр тӳпене!
Алпа сулкалашатăп, кăшкăратăп:
— Часрах вĕçсе хăпарăр тӳпене!
Мана эсир кӳренĕр те ылханăр —
Мана — хăмăшлăхри шух эteme.
Анчах ăнланăр, кăшт кăна ăнланăр,
Эп мар пулсан — пĕтме пулать, пĕтме!

* * *

Тулса çитнĕ панулми
пат! ӳкет.
Çĕр чĕтреннĕн, çĕр кисреннĕн
илтĕнет.

Чĕрĕ, çамрăк туратшăн
улми татах пулĕ-ха.
Çĕрте выртан улмашăн
Тепĕр турат пули-ха?

* * *

Улшуç, ав, урампа утать.
Кампа, мĕскер улăштарать?
Чунра ман уйрăлу пурнать,
Ун вырăнне вăл мĕн парать?

Çич тĕслĕ асамат асра.
Парса ярас-и ман ăна?
Эп илтекен кашни сасра
Йăмра юрри лăпкать мана.

Улăштарсан — эп кам вара,
Кам ун чухне мана паллать,
Кам шур кăлканлă улăхра
Ик аллине тăсса чупать?

Вĕçсе иртен хуркайăка
Алă сулса кам ăсатать,
Çав шухăшлă хăмăшлăха
Кам тус тесе вара хаклать?

Каях, улшуç, хăв çулупах:
Юлатăп эп хам пурнăçпах.

* * *

Ытла та канăçсăр ку шăплăх.

Шур юр çинче —
Хытса хуралнă туратсем —
Пăрланнă çĕленсем выртаççĕ.

Шур купасем —
Сасне çухатнă упасем —
Мăраннăн тĕлĕрсе лараççĕ.

Ытла та канăçсăр ку шăплăх:
Халь-халь çĕлен шуса тухас пек,
Халь-халь упа урса каяс пек.

* * *

Çăвар уçнă-уçманах
Вăрттăн сăмах вăш! тарчĕ.
Куçа хупсах ăсатрăм.
Çула тухнă-тухманах
Вăрттăн сăмах вăш! килчĕ.
Çăвар карсах пăрахрăм:

Тухса кайрĕ — йăпăлкка,
Калла килчĕ — чăпăркка.

## ÇЕПĔÇ КУЛĂ

Нарспи сассиллĕ çепĕç кулă
Çут улăх тăрăх сарăлать.
Шăтман чечек шăтса йăл кулĕ,
Телей, хаваслăх сапалать.

Ем-ешĕл хырлăх та вăраннă,
Ăна кĕтсе хăпартланать,
Салхулăхне таçта пытарнă,
Халь вăл та лăпкăн хумханать.

Нарспи сассиллĕ çепĕç кулă —
Чăваш хĕрарăмĕн кулли!
Ĕçре те питĕ çыпăçуллă,—
Ахаль-и кĕреки тулли?

Куратăр-и, вăййа тухаççĕ
Нарспи сассиллĕ сар хĕрсем?
Телейлĕрех те курăнаççĕ,
Хаваслăрах та куллисем!

## ИНҪЕТРИ ЮМАХ

Пӗрле ӳснӗ тантӑшсене,
Тамара Бахмутовӑна

Ҫав ҫуртра юмахсем пурӑнатчӗҫ,
Эп пурнаттӑм тата ҫав ҫуртра.
Шӑпӑрлан-тантӑшсем пухӑнатчӗҫ,
Йӑлтӑратчӗ пӗр пӗчӗк ҫурта.

Ҫурта мар, пысӑк ҫутӑ та пурччӗ,
Ку — юри, юмахра пурӑнма.
Пуҫтараттӑм тата ҫутӑ хурчӗ
Йӑлтӑрти «хуласем» хӑпартма.

Кашнин хӑйӗн юмах, хӑйӗн пурнӑҫ,
Кашни тантӑшӑн хӑйӗн кермен.
Мӗнлерех-ши вӗсем унта пурнӗҫ —
Ӗмӗтленнӗ ялан, ӳркенмен.

Пӗр-пӗрин хулине такӑр ҫулччӗ,
Тухса утнӑ та — пулнӑ пӗрле.
Никамран та нимрен чару ҫукчӗ,
Туй тусан та — кӗрле те кӗрле.

Пур асамҫӑ вӗсен, пур — тухатмӑш,
Чухӑн хӗрӗ, пуян — чул чӗре...
Ах, эс, пурнӑҫ, ачалӑх-пуҫватмӑш,
Хӑйне майлӑ тӗнче-кӗнчеле.

Кашнин хӑйӗн вучах, хӑйӗн — курнӑҫ,
Юмах мар та текех, мӗн калас.
Еплерех-ши вӗсен халӗ пурнӑҫ?
Такӑр ҫул та ҫухалчӗ пулас...

* * *

Юратăва, сыхлас тесе,
Хупса хутăм тимĕр читлĕхе.
Юрату вĕри-çке вăл, çунтарчĕ,
Ирĕлтерчĕ те çав тимĕре
вĕл! тарчĕ.

Тепринче,
Юратăва, сыхлас тесе,
Кайса хутăм çӳллĕ сăрт çине.
Юрату çунатлă-çке, хăватлă,
Хăлат пулчĕ те вăш! тарчĕ.

* * *

Чĕкеç чĕлхи вăрăмăш
Чĕвĕлти телей килчĕ.
Хам куçăмпа куриччен
Сасси таçта сарăлчĕ:
Илтмен çын та юлмарĕ.

Чĕкеç тĕкĕ çăмăлăш
Вĕлтĕрти хисеп килчĕ.
Хам кăмăлпа туйиччен
Çӳл тӳпене сулăнчĕ:
Курман çын та юлмарĕ.

Ах, телейлĕ теççĕ пуль,
Ах, хисеплĕ теççĕ пуль.

* * *

Авăтать куккук, авăтать куккук,
Хăмăшлăхра хăмăш авăнать.
Çурхи кун ăшши хĕлле килес çук.
Хăй вăхăтĕнче пурте савăнать.

Кайăк хур килет, кайăк хур каять,
Кăмăлу пулсан — ал сулса ăсат.
Кам унта йĕрет, кам унта кулать?!.
Пурнăç урапи хыт çулпа кусать.

Авăтать куккук, авăтать куккук,
Кайăк хур килет, кайăк хур каять.
Эп те савăнам савнăç çитнĕ чух,
Мĕн пуласси пур — пурпĕрех пулать.

* * *

Вăхăтлăха тăратăп та хытса:
Çĕр те çук пек, эпĕ те таçта.
Пăлан кăна шур пĕлĕте пырать йăтса.
Ĕнер те курнă эп ăна. Шăп çакăнта.

Сар хĕвеле пыратчĕ вăл йăтса...
Туратлă мăйраки — ман ĕмĕтĕн тымарĕ.
Ун хыçĕнчен — шăтман чечек
юлать шăтса.
Çав ыр пăлан нихçан куçран каймарĕ.

Пĕлетĕп халь: вăл пур пулсан —
Çĕр те пур, эп хам та пур ялан.

## ÇИТЕС ÇУЛШĂН

Çуркунне улмуççи чечекреччĕ.
Вăл туятчĕ хăйне хитререх,
Çулçине çут шевле илĕртетчĕ,
Курăнатчĕ улми ĕмĕтрех.

Кассăн-кассăн ăш çил çупăрлатчĕ,
Никама уйăрмастчĕ шух çил.
Пуринпе пĕр пек вăйă вылятчĕ,
Кашнинех вăл паратчĕ ăш пил.

Çĕр-анне сĕткенне шеллеместчĕ,
(Шухăш çук-ха ăна хурлама.)
Çуркунне улмуççи чечекрехчĕ,
Кĕркунне — курăнмасть пĕр улма.

Çутçанталăкăн аслă саккунĕ,
Хăть ятла халь сана, айăпла.
Улмуççишĕн çак кĕтнĕ кĕр кунĕ
Мĕн тесе килмеллеччĕ çапла?!.

Эп — этем. Эп — пыратăп, калатăп:
Ĕмĕт хăй те хăш чух чун уççи.
Пурпĕрех улмуна тутанатăп,
Пурăнах, пурăнах, улмуççи!

29449-чув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

2. Заказ № 4645.

* * *

Пурри пурришĕн кулянать.
Çукки —
çуккишĕн.
Ман пур та,
çук та —
Кулянмастăп.
Мĕн пуррине —
упратăп.
Мĕн çуккине —
шыратăп.

## АХАЛЕХ ПИТ ЛАЙĂХ

Ним те кирлĕ мар,
Ахалех пит лайăх.
Тĕлĕрет вăрман,
Тĕлĕрет тавралăх.

Уйăх — çип-çинçе —
Уйăх та ĕшеннĕ.
Çут пĕве çине
Хăй сăнне ўкернĕ.

Ним те кирлĕ мар,
Ахалех пит лайăх.
Тĕлĕрет вăрман,
Тĕлĕрет тавралăх.

Пур сукмак паян
Ыр çула тухмалăх,
Пур юлташ-тăван
Ал тăсса памалăх.

## ЮРАМАСТЬ ЮЛМА

Туссем ман лапталла вылятчĕç.
Атте калатчĕ: тух-ха урама,
Унта паян телей пайлаççĕ,
Асту, телейсĕр юрамасть юлма.

Тухса чупаттăм та — ытла аванччĕ,
Нимскер те кирлĕ мар мана унта.
Атте кайран вăлтса ыйтатчĕ:
Пайларĕç-и, кăтарт-ха, кил кунта.

Пайлаканни килмен пуль теттĕм,
Ыйтма та маннă, ан ятла.
Айван пуçпах кăшт тĕшмĕртеттĕм:
Ман пурте пур, тата мĕн ыйтмалла?

Ӳссен, яш-кĕрĕмсем ĕçе васкатчĕç
Атте калатчĕ: каç-ха улăха,
Унта паян телей пайлаççĕ,
Ĕçре тупни — пин хут паха.

Мĕн илтнине ăса хурса утас-и —
Тăван яла килеп инçе çултан.
Хирĕç тухса атте ыйтас пек:
Пайларĕç-и, кăтарт-ха, кил кунта.

Тавах, атте, ăнлантăм сăмахна:
Телейсĕр юрамасть юлма.

## ЫР КУРАССА ПЕЛЕТЕП

Ачаламăхăм — çăм мечĕк пек.
Ма сиккелен мĕн пуласса пĕлмесĕр.
Мĕн пуласса, мĕн курасса пĕлмесĕр
Сикетĕн çав çăм мечĕк пек.

Эс, çамрăклăх, шух сăнă пек.
Ши! шăхăран хуçăласса пĕлмесĕр.
Хуçăласса, çухаласса пĕлмесĕр
Ши! шăхăран шух сăнă пек.

Эс, ватлăхăм, хуракăш пек.
Шав ăнтăлан ывăнасса пĕлмесĕр.
Ывăнасса, хурланасса пĕлмесĕр
Шав ăнтăлан хуракăш пек.

— Эп сан ачалăху.
Çăм мечĕк пек.
Ӳксен те — çитес çĕре çитетĕп.

— Эп сан çамрăклăху.
Шух сăнă пек.
Пĕтсен те — чĕр хурлăха çĕнетĕп.

— Эп санăн ватлăху.
Хуракăш пек.
Ырсан та — ыр курасса пĕлетĕп.

* * *

Пĕрре шутлатăп:
Çак пурнăç — пуш хутаç пек пушá,
Куçа хупсан — уçма хăрушă.

Тепре шутлатăп:
Мĕн чухлĕ ĕç! Мĕн чухлĕ савнăç!
Чунра çунать чĕп-чĕрĕ шанăç!

## ТĂШМАНĂМА

Чунра ман —
Шур хурăншăн шур тунсăх пур.
Сан мĕскер пур?
Ылтăн-кĕмĕл енне туртăм пур.

Асра ман —
Атте-аннен ăш пилĕ пур.
Сан мĕскер пур?
Ют вырăнта ют кермен пур.

Умра ман —
Тăван çĕршыв панă пехил пур.
Сан мĕскер пур?
Çын хуйхипе тупнă ырлăх пур.

## САМАНТЛĂХА...

Самантлăха-и, тен, ăнлантăм,
Йăлтах халь илнĕ хăй тĕсне.
Самантлăха-и, тен, ăнлантăм,
Мĕнпе виçетĕн çын ăсне?

Паçăр кăна сăмах вĕриччĕ:
«Пуçа таяп сан умăнта».
Паçăр кăна чуну хĕрӳччĕ,
Ӳпкев иккен халь сăнунта.

Çĕн шухăш халĕ ман çуралчĕ:
Çук, сар чечек те сарăхман.
Иккĕленӳ пачах çухалчĕ —
Ун тĕсĕ сарă, хăй — шанман!

Самантлăха йăлтах куратăп:
Кашни çынна пĕлеп ятран.
Мĕн курнине аса хуратăп —
Пăтрашас марччĕ-ха кайран.

Пăтрашас марччĕ те—пĕлесчĕ:
Ăçта — усал, ăçта — ырри.
Тӳр çул çине вара çитесчĕ
Йăлт çухалсан та мĕн пурри...

* * *

Сар чечексем ҫинчен калаҫҫӗ тӗрлӗ.
Чӑн, маншӑн хӗрли мар, сарри ҫав юрату.
Тахҫан, тен, пур чечек те пулнӑ хӗрлӗ,
Тен, хӑшпӗрне саратнӑ уйрӑлу?..

## ЁМӖТ ҪУЛӖ — УҪӐ

А. Смолина

Кӑйкӑр куҫлӑ та ҫап-ҫамрӑк чипер каччӑ,
Кӑмӑлна хытар та тыт-ха ӑйӑра.
Ҫамрӑк чух кӑна вӑл чун хӗрӳ пулатчӗ,
Чӑтӑмлӑх пулсассӑн — пурнӑҫ алӑра.

Эх, вӗҫтер вут евӗр ешӗл вӗтлӗх витӗр,
Шутлӑ кунӗ шухӑ — вӑхӑчӗ кӗске.
Ҫулӗ — пӑлан ҫулӗ — хӗрлӗ хӗвел витӗр,
Пурпӗр тупӑнать ҫав тӗрлӗ тӗмеске.

Тӑпӑр-тӑпӑр сасӑ кӑмӑлна хуҫсассӑн,
Пул хӗрӳллӗ, тӳрӗ, ан ятла ҫулна.
Ырӑ ут та хушшӑн такӑнать пулсассӑн,
Кирлӗ-кирлӗ маршӑн ан ҫухат пуҫна.

Кӑйкӑр куҫлӑ та ҫап-ҫамрӑк юланутҫӑ,
Эх, вӗҫтер вут евӗр, ёмӗт ҫулӗ — уҫӑ.

* * *

Шур кăлканлă улăхра
Çил вылять, çил вылять.

Кăшт тĕлĕрнĕ тунсăха
Хускатать, хускатать.

Шурă тунсăх вăранса
Сас парать, сас парать.

Сасси чуна çапăнса
Ян каять, ян каять.

Шур кăлканлă улăхра
Çухалать, çухалать...

* * *

«Калас сăмах шартах хуçăлчĕ,
Шăнса хуралнă турат пек.
Тĕнче те, кăмăл та ӳçăлчĕ:
Асапланмастăп эпĕ тек»,—

Терĕм ун чух эп — чун çуннă чух.
Вăхăт шăвать вăл. Вăхăт вăл — шух.

Тутлă улман та пит хытă хуппи:
Килтĕр татах çав хавас ăш хыппи.

## АСӐРХАТТАРУ

Ҫуркунне ачасем суя лакӑм тӑваҫҫӗ,
Асӑрхан, асанне, терӗм эп пӗринче.
Вӑхӑта айван чух минутпа ҫав шутлаҫҫӗ.
Ҫирӗмре халь тӑрап асанне умӗнче.

Ҫуркунне чунӑма хӑйне майлӑ пӑлхатрӗ,
Пур илтен сӑмаха ӗненес пек туйнать.
Такам вӗҫсӗр савса
хӑлхаран пӑшӑлтатрӗ,—
Ҫут тӗнче ҫутӑрах ун пек чух курӑнать.

Ултав ҫук, суя ҫук,— пурте-пурте
пит лайӑх.
Уйрӑлу, улшӑну, тарӑху вучӗ ҫук.
Пур хаваслӑх, пур ҫутӑ пуласлӑх-малашлӑх
Ҫурхи ҫамрӑк чӗре ҫирӗмре пулнӑ чух.

Асӑрхан, ҫуркунне суя лакӑм чаваҫҫӗ,—
Пӑшӑлтатрӗ ытарлӑн кайран асанне.
Тав ӑна, ыррине ырӑпа тав тӑваҫҫӗ...
Асӑрхантӑм: чӑммарӑм ултав лакӑмне.

## ÇУРКУННЕ

Тĕнче шур кĕрĕкне хывать те
Куçран пăхса, йăл-йăл кулать.
Сар хĕвеле хĕвне хурать те
Çут çуркунне пулса тăрать.

Пĕрне парать вăл сарă тутăр,
Е тепĕрне сĕнет кулач.
«Епле хавас вăл, курăр, курăр»,—
Пăшăлтатса юлать тăхлач.

Хăта утать, ай-хай сухалĕ...
Хура çĕре тытса пăхать.
«Кăçал апла кĕрӳ сухалĕ»,—
Тесе çĕн пӳрт енне утать.

Пуç каçăртать çап-çутă шанчăк,
Ырра сиссе çунат сарать.
Хур аçипе вылять, ав, анчăк,
Хуçи кулса хапха сăрлать.

* * *

Ирĕклине ирĕк те — кăвак инçет,
Вĕçсемччĕ ирĕклĕн, мăнаçлăн.
Паян пиçмен çырла ыран пиçет,
Эс инçетрен ăна кураймăн!

## КĂВАЙТ ÇУНАТЬ

Вучахра, пур-çук вăйне пухса,
Кăвайт çунать.
Пăшăлтатса та антăхса
Асапланать.

Асапĕнче — хура та тĕпсĕр тӳпере—
Çут çăлтăрсем кулаççĕ.
Асапĕнче—шап-шурă уçă тĕтрере—
Çил ачисем çывраççĕ...

Вучахра, пур-çук вăйне пухса,
Кăвайт ялтрать.
Сӳнсе,
Телейлĕ асапне
Манма хăрать.

* * *

Чĕрем
Чул катăкĕ пулсассăн,
Эх, пурăнăттăм,
Çĕр çавăрăттăм.
Çын шухăшне те пĕлмĕттĕм,
Асапланса та пĕтмĕттĕм.
Чĕрем, çапах та, сив чул мар çав.

Пурнăç
Шыври сар çу пулсассăн,
Эх, ярăнăттăм,
Эх, пурăнăттăм.
Ĕç ĕçлесе ывăнмăттăм,
Çыншăн çунса пурăнмăттăм.
Пурнăç, çапах та, сар çу мар çав.

* * *

Шур кӑлканлӑ улӑхра
Пур хӑва.
Шур кӑлканлӑ улӑхра —
Шур тиха.

— Епле чупать, пӑх-ха, э?
— Ай, ара,
Хӑва хулли халлӗхе
Ҫук асра.

* * *

Кашни каҫ
Шӑплӑх манпа калаҫать.
Хӑш чух сасӑпа,
хӑш чух сассӑрах сӑмахлать.
Вӑл ялан мар:
ҫывӑрма выртсан —
каласать,
шухӑша путсан —
калаҫать.
Мана йывӑр чухне,
эп пӗчченҫӗ чухне,
сан вырӑнна
хӑш чухне
калаҫать.
Е кирлех те пулсан —
ятлаҫать,
Эп савӑнсассӑн —
савӑнать.
Кашни каҫ
шӑплӑх манпа калаҫать...

* * *

Çунакан вутпуççине çунтăр тенĕ çĕртенех
шыва пăрахрăм.
Чăшăлтатрĕ, чăшăлтатрĕ —
тĕтĕм кăларчĕ те шăпланчĕ.
Шыва майăн юхса кайрĕ аната.

Кĕтсе илнĕ çынна савас тенĕ çĕртенех
манса кайрăм.
Айăпларĕ, айăпларĕ —
алне сулчĕ те лăпланчĕ.
Ним пулман пек утса кайрĕ малалла.
. . . . . . . . . . . . . . ..
Каçсерен
çав тĕтĕм шăрши куçа кĕрет,
Çĕрсерен
савайман çын кулли тĕлленет.

* * *

Хĕрнĕ хăйăр çинче —
манăн ят.
Виçĕ ĕмĕт те
виç çухату.
Çамрăк ĕмĕр иртсен —
мĕн юлать?
Пĕр çут ĕмĕт те
пĕр юрату,

* * *

Шартламаччĕ, сивĕччĕ.
Кайма тухаттăм.
Каялла килме ĕмĕтленсе,
Паллă хăвараттăм.
Шартламаччĕ, сивĕччĕ,
Çула çавах тупаттăм.

Шартламаччĕ, сивĕччĕ.
Пыма тухаттăм.
Анне патне çитес тесе,
Чуна параттăм.
Шартламаччĕ, сивĕччĕ,
Çавах пырса кураттăм.

Вăхăт иртрĕ, вăхăт иртрĕ,
Çав паллăсем ăçта-ши?
Пырас пулсан, тухас пулсан,
Çула тупса пулĕ-ши?

Вăхăт иртрĕ, вăхăт иртрĕ,
Анне кĕтни ăçта-ши?
Çитес пулсан, кĕрес пулсан,
«Хĕрĕм» текен пулĕ-ши?

* * *

Мĕскер куççуль? Тăр шыв вăл тетĕн?
Шывран, шăнсан, çут пăр пулать.
Уру шăвать те, ак — ӳкетĕн,
Куççуль вăл — куççулех шырать.

## АСАМЛĂ АРЧА

Тăхтасам, шухă шуçăм, тăхта,
Шухăша пĕр çĕре пуçтарам.
Иртсе кайнă хавас вăхăта
Асилӳ арчине пытарам.

Асилӳ арчинче — пĕр тĕнче:
Леш касри ачасен сассипе
Янăрать леш енчи униче.
Шух ачалăх çӳрет сиккипе.

Асăмрах малтанхи юрату —
Сарă çулçăн выртать тĕлкĕшсе.
Салтак тумлă савни — уйрăлу —
Тем калассăн пăхать тĕмсĕлсе.

Çут хĕвел питĕнче — сар улма,
Сар улма пахчинче — ман пичче
Шурă тутăр сарать те ума
Кучченеç хатĕрлет — сар улма.

Асилӳ арчинче — пĕр тĕнче,
Тĕрлĕ çул — тĕнчен тĕрлĕ енне.
Ав, çырма леш енчен, шкул енчен,
Таврăнать хаклă çыннăм — анне.

Кирлĕ мар мана ылтăн шăрçа:
Ман пуянлăх — асамлă арча.

* * *

Çуркунне ахăлтатса кулать.
Сар шевлене
Хăй аллине илет те —
Сапать, сапать...
Ăна
Шăнкăртатса юхан
Шыв юххине ярать,
Шăнкăрч çунатти
çине хурать,
Пурне те
Хăй куçĕпе курать.
Хăй аллипе тытать.
Сар сăпкари ачапа
Пытанмалла вылять.
Пур таврана
Çут кăмăлне парать.
Çуркунне ахăлтатса кулать.

* * *

Кĕсменсĕр кимĕ юхрĕ.
Каласа пĕтереймен сăмах пек,
Ĕненме пăрахнă этем пек,
Хăравçă кулă пек.

Нихăçан каялла таврăнми,
Курăни-курăнми,
Никама пулăшма хăяйми
Кĕсменсĕр кимĕ юхрĕ.

Пурнăç пек шавлакан, пăтранан тинĕсре
Кĕсменсĕр кимĕ уссăр юхрĕ.

* * *

Çынсем çынсен чунне кӗреççӗ.
Ыйтмаççӗ вӗсем, кӗреççӗ.
Ирӗк ыйтмасăр,
Хирӗç-и çын е кӗртесшӗн —

Вара...
Хăйсене кирлӗ пек
Иртӗхеççӗ,
Силлеççӗ...

Çынсем — çынсен чунне кӗреççӗ.
Ыйтмасăр çӳреççӗ...
Ыйтмасăр —
Этемӗн чунне кӗреççӗ.

* * *

*А. Е. В.*

Сывă-и эс, тусăм, шур кăлканлă улăх,
Ма сана хупларӗ шурă-шурă юр?!
Юлашки хут килтӗм, тек килместӗп урăх,
Пилсӗр çӳрекенӗн мӗн уссийӗ пур.
Ыр Кӗтне те манăн, тен, кӗтсе ӗшеннӗ.
Ыйтас кăмăл пурччӗ, юрӗ-çке, тăхтас.
Ӳпкелес теместӗп. Шăннă—чӗмсӗрленнӗ.
Иртнӗ тунсăха халь мӗншӗн вăратас?!

Ан ятла, эппин, эс, чуншăн çывăх улăх,
Пуçăма таятăп, ав, тӗнче курать.
Юлашки хут килтӗм, тек килместӗп урăх...
Каяс мар тесен те — каясах пулать.

## ШУРӐ-ШУРӐ КӐВАКАРЧӐН

«Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн,
Ма вӗҫетӗн пӗр-пӗччен?..»—
Тенине эп астӑватӑп
Чӑваш халӑх юрринчен.
Ахаль мар ун пек юрланӑ,
Пулнӑ, пулнӑ вӑл сӑлтав.
Тӑлӑха нумай хӑварнӑ
Урнӑ вӑрҫӑ, курнӑ ҫав...
«Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн,
Ма вӗҫетӗн пӗр-пӗччен?..»—
Кукамай ҫапла юрлатчӗ
Чунӗ хытӑ кӳтнӗрен.
Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн,
Тен, хӑй пулнӑ кукамай?
Юрӑпа кӑшт йӑпансассӑн
Чунӗ каннӑ хӑйне май.
Упӑшки те... эс куратӑн,
Пӗр хыпарсӑр... тупӑнман.
Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн
Эсех мар-ши, кукамай?!

* * *

Хӑшпӗр ҫынсем шавах чееленеҫҫӗ:
Ури шуса ӳксессӗн те,
«Туя илмешкӗн пӗшкӗнсеччӗ»,— теҫҫӗ.

## ÇИТМЕЛЛЕ

Шур парăслă, çут ĕмĕтлĕ шур кимĕ,
Çитес çĕре эс тухрăн-и çитме.
Çитес куна эс тухрăн-и виçме,
Шур парăслă, çут ĕмĕтлĕ шур кимĕ?!

Ах, ахăрать сив хумлă сивĕ тинĕс,
Умрах тата — хыт чунлă хытă чул,
Пырса кĕрес — пăчланĕ çитес çул...
Ах, ахăрать сив хумлă сивĕ тинĕс.

Шур кăпăклă хаяр та кăвак тинĕс,
Çулçӳревçе мĕн-ма эс хӳтерен,
Сивĕ хума мĕн-ма эс хӳтĕлен,
Шур кăпăклă хаяр та кăвак тинĕс?!

Ах, ахăрать сив хумлă сивĕ тинĕс:
Пуçламăшĕ те вĕçĕ — курăнмасть.
Ытахальтен — никам çула тухмасть.
Ах, ахăрать сив хумлă сивĕ тинĕс.

Шур парăслă, çут ĕмĕтлĕ шур кимĕ,
Çитес çĕре сан пурпĕр çитмелле!
Çитес куна сан чыслăн кĕмелле,
Шур парăслă, çут ĕмĕтлĕ шур кимĕ!..

* * *

Кӑтра пуҫлӑ сар ача
Чие енне туртӑнать.
Ал ҫитмест-ҫке, пит ҫӳлте...
Тепӗр хӑлаҫ ӳсессӗн,
ҫитессӗнех туйӑнать.

Шур сухаллӑ ват мучи
Ывӑл енне туртӑнать.
Ах, килмест-ҫке, ах, инҫе...
Тепӗр кӑштах пурӑнсан,
килессӗнех туйӑнать.

Кӑтра пуҫлӑ ачине
Турат авса парар-и?
Шур сухаллӑ мучине
Телей тупса парар-и?

Шутлӑ кунӗ ан пӗттӗр,
Кӗтсех ӗмӗр ан иртмӗр.

* * *

Эп пӗрре те халӗ кӳренместӗп:
Пулни —
пултӑр,
Пуласси
— пулать.
Иртнине таврасшӑн ҫӳреместӗп:
Сӳнни —
сӳнтӗр.
Сӳнменни —
ҫунать.

## АСА ИЛ

Тӳпери шур уйӑх сенкер ҫутӑ сапрӗ,
Шурӑ хурӑн, хурлӑн ан кӗтсем текех,
Ман пекех сана та тунсӑх сӑнӗ ҫапрӗ,
Эс те халь пӗчченҫӗ, эс те ман пекех.

Сарӑ ҫулҫуна эс ан вӗҫтер саламлӑн,
Пӗлес ҫук ӑна вӑл, курас ҫук ӑна.
Иртнӗ ҫут телейӗн, манӑҫми самантӑн
Тунсӑхӗ упранӗ пӗр манра кӑна.

Аса ил, савниҫӗм, аса ил хавассӑн:
Иккӗн лартнӑ хурӑн пур шкул хыҫӗнче.
Пур тата телейлӗ юрату асапӗ,
Пур ӳпкевсӗр тунсӑх манӑн куҫсенче.

* * *

Шурӑ терӗҫ, шурӑ терӗҫ,
Шурӑ тесех шутларӑм.
Сӑнасарах пӑхрӑм та —
Шурӑ мар-мӗн, шупка-мӗн.

Лайӑх терӗҫ, лайӑх терӗҫ,
Лайӑх тесех шутларӑм.
Сӑмах хушса пӑхрӑм та —
Лайӑх мар-мӗн, япӑх-мӗн.

Ҫын калани — виҫ ҫула,
Хам ӑнланни — ҫӗр ҫула.

* * *

Хура тутăр хурлăн ўкрĕ урайне...
Ан пăх эс ыйтуллăн, ан пăх тĕлĕнсе.
Кам ирĕкпе кĕрĕ шăннă пăр айне?
Е савсах-ши кайĕç «сивĕнтĕм» тесе.

Ўпкев çук-и санăн? Лайăх кай апла,
Тăвалла ман çулăм, санăн — аната.
Ал сулас килет те — пытарап алла,
Юратсах каятăн. Ирĕкпех тата.

Ан пăх эс ыйтуллăн, ан пăх тĕлĕнсе,
Телейўн çути сан — хăв çулу çинче.
...Тĕлĕрет йăмралăх, шăп тăрать тĕнче,
Ик шăпа, ик пурнăç ик çыран енче.

* * *

Çĕрсерен
Иртнĕ кунсен сукмакĕпе
                    çўретĕп,
Иртнĕ кунсен,
Çутă кунсен
Сар çулçине тататăп.
Кашни пĕр сăмахран
Пĕрер шăрçа туса,
Якатса та çутатса,
Çитес кунсен,
Хавас кунсен
Шур çиппине тиретĕп.
Шăрçаран шăрçа хурса,
Паянлăха
        çитетĕп.
Йăлтах эп асилетĕп.

## ТУСЛĂХ ПӲРЧĔ

Шаккамасăр кĕнĕшĕн ан ятлăр,
Чыс-мухтав пĕр пĕчĕк çемйĕре.
Кам пĕлет, тен, вăрттăн кулса калăр:
Пирĕншĕн кăна çак çурт. Пĕрре.

Ĕмĕрлĕх килмен, пулсамăр лăпкă.
Тухмалла-тăк — алăк та çумрах...
Ĕмĕр тăтăр килĕрте ыр шăплăх,
Савăнăç та пултăр яланах.

Тухнă чух юри манса хăварăп
Хамăн чĕрери юратăва.
Хăвăр сисмен чух та ăшă парăп.
«Иртĕр»,— тетĕр. Ну, эппин, тавах!..

## КАМ ĔНЕНĔ!

Хĕл кунĕ
Çуркуннене савмасть тесен —
Кам ĕненĕ?

Хăй пĕтессе пĕлсе тăрса,
Ун еннелле вăл ăнтăлать савса.

Анчах...
Çур кунĕ
Кăра хĕле савать тесен —
Кам ĕненĕ!..

## ЭС ПЁРЕХ АСРА

Ан чётре, йăмра,
Ан чётре.
Эс пёрех асра,
Чёрере.

Айăп çук санра,
Ан шарла.
Кăшт тăрам, ара,
Шăплăхра.

Çулçă тăкăнать
Çул çине.
Ёмёт йăванать
Чул çине.

Тухаймарё вăл —
Çук ялта.
Манса кайнă вăл
Ман ята.

Ан ятла, йăмра,
Ан ятла.
Эс юлан асра
Ялана.

## МЁНЛЕ СЫХЛАННӐ!

Иртнисене эп маннӑ.
Манӑн асра
Усалли те ҫуккӑ,
Лайӑххи те ҫук.
Ман асра —
ҫав кулӑ...
Эп ёненмен асамлӑх
куллунта.
Эп ӑнланмастӑп,
Иртнисене эп маннӑ,
Анчах мёнле сыхланнӑ
Ҫав кулӑ ман асра?
Ҫук, пытармастӑп,
Сан куллуна юратнӑ...
Тен, ҫавӑнпа ӑна эс
Хӑварнӑ ман асра?
Тен, асӑнмалӑх патӑн пуль
мана?!
Эп ӑнланмастӑп:
Иртнисене эп маннӑ,
Анчах мёнле сыхланнӑ
Ҫав кулӑ ман асра...

* * *

Эп, сан патна пырас тесе,
Мăкăньрен хĕрлĕ сăн çаптартăм,
Шăплăхран ăш сăмах пуçтартăм.

Пытăм та —
Ытла хĕрлĕ терĕн.
Ытла ачаш терĕн.
Тиркерĕн.

* * *

Çич кунлăх-и çич тăван?
Çичĕ тăван çич çуллăх?
Усал тăшман курсассăн,
Çиччĕн харăс тăрсассăн
Çитмĕл çуллăх хур тăвать.

Çич кунлăх-и çич тăван?
Çичĕ тăван çич çуллăх?
Хура хурлăх пуссассăн,
Çиччĕн харăс пăхсассăн
Çитмĕл çуллăх вăй парать.

Çич кунлăх-и çич тăван?
Çичĕ тăван çич çуллăх?

Çичĕ тинĕс типиччен!
Çичĕ ĕмĕр иртиччен!

* * *

Кĕнеке хушшинче — шур кăлкан...
Вунă çул-ши выртать, ытларах?!
Ма çаплах тĕтре витĕр пăхан?
Ан пăхсам:
Эп манман.
Эп — манман.

Кĕнеке хушшинче — шур кăлкан...
Çут хаваслăх сасси, ĕмĕлки.
Ма çаплах çулсем витĕр ыйтан?
Ан ыйтсам.
Эп манман.
Эп — манман.

Кĕнеке хушшинче — шур кăлкан...
Шурă тунсăх юрри, чун туртни.
Мĕнлерех эсĕ халь пурăнан?!
Ан мансам.
Эп манман.
Эп — манман.

## ХӐРАТӐП

Утӑм.
Тепӗр утӑм.
Хуллен эп пыратӑп.
Хӑратӑп!
Эп пынӑ сывлӑш юхӑмне
Туйса,
Тарасран хӑратӑп.
Эп
Утатӑп.
Шухӑшӑмпа куçатӑп.
Пур юрату.
Куратӑп.
Анчах,
Эп пынӑ сывлӑш юхӑмне
Туйса,
Тарасран хӑратӑп.

* * *

Эй, юрлаттӑн юррине!
Эй, калаттӑн кӗввине:
«Ташла, ухмах,
Илсе парап пушмак;
Çӳллӗ кӗлеллине,
Вуник тӳмеллине».

Эй, ташларӑм,
Эй, ташларӑм!
Ура кӗли ывӑнчӗ,
Урай хӑми аванчӗ.

Кĕвĕ-çемĕ пĕтсессĕн,
Пуçа шухăш сыранчĕ.
Ухмах ятне илтсессĕн
Вĕри кăмăл сивĕнчĕ.

Атя пĕрле тухар-и,
Атя пĕрле ташлар-и?
Эпĕ илтнĕ сăмаха
Иккĕн пĕрле пайлар-и?

* * *

Утма çулăм тайлăк,
Те пулать çитсе.
Талăк хыççăн талăк...
Ан пăх тĕлĕнсе.

Ална пар теместĕп,
Пырас çук, пĕлеп.
Никама чĕнместĕп,
«Çулĕ ансăр»,— теп.

Çулĕ ансăр мар та —
Йывăр-çке сĕре.
Авă, çил-тăман та
Хирĕçлет пире.

Утас çулăм йывăр,
Чĕнес çук пĕрле.
Çурăлать пек кăкăр...
Чăтăмлăх пилле.

## СИВĔ ÇУТĂ

Т. С.

Ак пытăм эп.
Сан чӳречӳн сенкер çути
Юри кăшт куç хĕссе, йĕкĕлтесе
Шеллевсĕр сирпĕнет пек ман енне.
Çук, сăнă мар эс, сенкер çутă,
Çук, сăнă мар,
Халь тин ниме те эс улăштараймăн.

Пĕлетĕп эп.
Таврăнусăр çак кунçул утти.
Сан суя сăмахна ĕненсе
Миçе çул эп пурăнтăм хавас ĕмĕтпе?!
Çутат, эппин, вĕрисĕр çутă,
Ку темех мар.
Сив çутупа кăна эс хĕм кăлараймăн.

Каятăп эп.
Сан чӳречӳн сенкер çути
Улакан сив çилпе пĕрлешсе,
Улталасшăн татах ăнтăлать ман енне.
Виç утăмлăх кăна эс, сенкер çутă.
Яланлăх мар.
Мĕн пуррине çапах эс путараймăн.

Çутат апла.
Çутат эс, пушă çутă.
Кулăпала куççуллĕ сенкер çутă.

## ШУРӐ ЮР ЮРРИ

### 1

Паллаймастӑн-и мана, паллаймастӑн-и,
Ҫавраҫил юрри эп, шурӑ юр юрри.
Тарӑн кӑпӑш кӗртӗн,
Шӑннӑ хытнӑ ҫӗрӗн
Шанчӑк пек хӗрӳллӗ чи вӗри юрри.

Паллаймастӑн-и мана, паллаймастӑн-и,
Сивӗ хӗл юрри эп, ҫил-тӑман юрри.
Кӑчӑр-кӑчӑр сасӑн,
Тунсӑх пуснӑ каҫӑн
Ҫут мерчен ҫутиллӗ йӑлтӑркка юрри.

Паллаймастӑн-и мана, паллаймастӑн-и,
Утас ҫул юрри эп, ҫитес кун юрри.
Кайнӑ кайӑк хурӑн,
Калла килес ҫулӑн
Ҫурхи кун кӗввиллӗ шурӑ юр юрри.

### 2

Эй, ҫуллахи кун!
Санӑн юрруна эп юрлаймастӑп.
Хамӑн юрӑ, хамӑн кӗвӗ пур.
Санӑн юррупа эп савнаймастӑп:
Савнаканӗ мансӑрах, ав, пур.

Ӑнсӑртран, тен, сассӑма илтсессӗн,
Ал ҫупма анчах эс ан хӑтлан.
Эп юрлап — куҫҫуль куҫа килсессӗн.
Шурӑ юр ман юрӑ. Эп — тумлам.

## ШАНĂÇ

Хутран-ситрен хурри те пулкалатчĕ:
Е çил-тăман хуплатчĕ пек çула.
Çапах та çут тĕнче шанса паратчĕ
Юмах пек пысăк ШАНĂÇ кунçула.

Çав ШАНĂÇ — чăннипех те ыр хăватче...
Çул шыраса аташнă вăхăтра
Мисе енче мисе суя кăвайтчĕ,
Чĕре тапма чарнас пек кăкăрта.

Хĕвел шевли самантлăх çухалатчĕ,
Ырри те, усалли те — пĕр шайра.
Пичче сасси пулса пырса тухатчĕ
Асамлă ШАНĂÇ çакă самантра.

Сасартăках ман çулăм çуталатчĕ,
Ырра шанса утаттăм малалла.
Хутран-ситрен хурри те пулкалатчĕ —
Пĕрлех пыратчĕ ШАНĂÇ манпала.

## ЭСĔ — ЮРĂ

Эсĕ — юрă. Эп — чĕлхесĕр юрăç.
Пирĕн пĕрлĕх çуккă. Çул та ик енче.
Сан патна пырсассăн, тĕлĕнсе, тен, кулĕç
«Тупнă,— тейĕç,— юрăç, эй, тĕнче!»

Эп чĕлхесĕр юрăç, эсĕ юрă.
Сан çинчен юрлатăп сассăр, ĕмĕтпе,
Тен, такамшăн пулĕ чăннипех те кулă...
Вĕсем пек юрлаймăп. Юрлăп чĕрепе.

* * *

Пĕлтĕрхи юр пĕрчине
Кăçал шыраса тупаяс пек
Хыпăнса чавалатăп
Раштав лартнă шап-шур купана.

Кайран, алă шăнса кӳтнине туйса,
Хамран хам вăтанса — уттаратăп.

Тахçан илтнĕ ачаш сăмаха
Паян та илтме пултарас пек
Антăхса эп тăнлатăп
Шыв чуппи пек юхан юмахна.

Кайран, урăххишĕн çунан туйăмна ăнланса,
Хĕмленен чунăма пытарса — пăрăнатăп.

* * *

Эс аякра.
Мĕнле майпа
Илтетĕп сассуна?
Ăнлантăм:
Эсĕ мана
ăсатнă чух —
тухатнă.
Манпа пĕрле
телей сунса,
хăв юрруна ăсатнă.

* * *

Н. З.

Юлташ та мар эс, тус та мар,
Усал тăшман та мар эс маншăн.
Сан юрруна кăшт юрлайманшăн
Паллакансем пек уйрăлар.

Хирĕçлейместĕп-ха ăспа:
Юррушăнах хыпса çунаттăм.
Çемме лармасăр, ав, çухалтăм —
Юрла пуçларăм та саспа.

Мĕскер вăл сасă? Сас — чун мар,
Чунрах янрать çав çутă çемĕ
(Сан кăмăлна пĕрех çитеймĕ).
Эп саншăн халь — никам та мар.

Ытла пахаччĕ çав юрру.
Кĕвве кăна кăшт ларaймарăм:
Тăшман та, тус та пулаймарăм.

* * *

Эп тунă йăнăшсемшĕн
Мана эс айăплатăн.
Эп айăплă, эп айăплă, мĕн калăн...
Анчах асту!
Ман йăнăш
Куçу тĕлне пулман пулсассăн,
Çав йăнăшнах манран малтан
эс хăв тăваттăн.
Мана тав ту!

* * *

Хĕрлĕ çулăм кĕрет хĕсĕнсе
Чĕрене.
Чĕререн —
Йĕркесем хушшине.
Ырату
е
вăлах юрату
Кашни юн тымарне
витерет...

Çиллĕ çумăр килет —
Пĕртен-пĕр сăмаху.
Пĕртен-пĕр хускану
Сивĕ çумăр пулса,
Çиллĕ çумăр пулса,
Сӳнтерет
Хĕлхеме.

* * *

Иртнисене манра эс
ан шыра.
Вăл манра мар,
вăл пĕтĕмпех санра.
Савнăçунта,
Сан аллунта,
Сан куллунта...
Эс çухатман пулсан —
вăл пĕтĕмпех санра.
Иртнисене манра эс
ан шыра!

* * *

Хура Шурра калать:
«Мана тав ту,
Эп пулмасан —
Хăв шуррине туймастăн!»

Суя Чăна калать:
«Мана тав ту,
Эп пулмасан —
Хăв чăннине туймастăн!

Каçĕ Куна калать:
«Мана тав ту,
Эп пулмасан —
Хăв чăннине туймастăн!»

Ман мĕн калас?
Хам камне пĕлсессĕн,
Кама тав тăвас?

* * *

Тĕрлĕ-тĕрлĕ шухăшран
Тĕрĕллĕ кермен лартрăм:
Виç кĕтесĕ савнăçран,
Виç кĕтесĕ хурлăхран.

Хăш кĕтесĕ сан пулать?
Хăш кĕтесĕ ман пулать?

* * *

Мĕнле апла?
Пĕрлехчĕ-çке телей.
Ăçта, хăш вăхăтра,
Мĕнле çухалчĕ?
Ытла та çутăччĕ вăл
Пирĕн,
Ытла та пысăкчĕ...
Çапах çухалчĕ.
Çути,
Куçа йăмăхтарса,
Суккăрлатса хăварчĕ.

* * *

Калайман сăмахна вулама хăнăхнишĕн,
Эс сывлан сывлăшпа сывлама тăрăшнишĕн
Чĕннишĕн, çуннишĕн,
Ăнланма тăрăшнишĕн,
Юратнишĕн,
Çакă çут тĕнчере Эс пурришĕн
Айăплă-и эпĕ?

Сан умри çĕр те çичĕ сукмакшăн,
Хăв çулна эс хăвах суйланишĕн,
Кайнишĕн, юлнишĕн,
Таврăнас килменнишĕн,
Юратнишĕн,
Çакă çут тĕнчере Вăл пурришĕн
Айăплă-и эсĕ?
Айăплă-и эпĕ?

* * *

Эп — шăплăх.
Сана халь шăплăх кирлĕ.
Кил ман пата.
Сан куçунтан пăхса
утса эп çӳрĕп.
Кулмасăр, калаçмасăр,
сывлама хăяймасăр...
Манмаллине мантарăп,
Савмаллине савтарăп.
Шавламасăр, калаçмасăр,
Куç хупма хăяймасăр...
Эп — шăплăх.
Сана халь шăплăх кирлĕ.
Кил ман пата...

* * *

Эп кĕркунне сăнне илетĕп,
Кăмăлăмпа та — кĕркунне.
Сар çулçă пек вĕçсе иртетĕп,
Выртатăп сан уру умне.

Шелленипе-ши — таптамарăн...
Çук ырату ман. Çулçă эп.
Ма сарăхма малтан чармарăн?
Эп халь сар çулçă. Çулçă эп.

* * *

Эс янра-ха, шухă-шухă юрă,
Эс çăвах апла, çут чунлă юр.
Çакăн пек чухне ман кăмăл ырă,
Мĕн кирли йăлтах халь манăн пур.

Шухăшлас тесессĕн — шурă тунсăх,
Асилес тесен — асилмелли.
Сар хĕвел сассиллĕ чаплă кунăм,
Пур-çке çутă ĕмĕт — çитмелли.

Шурă юр юрра куçса юрланăн
Çакăн пек чухне эп ирĕлеп.
Хăрнă йывăç çĕнĕ хунав янăн
Тепĕр хут çак çĕр çинех килеп.

Эс янра-ха, шухă-шухă юрă,
Эс çăвах апла, çут чунлă юр.
Çакăн пек чухне ман кăмăл ырă,
Мĕн кирли йăлтах халь манăн пур.

* * *

Ятлă çыннăн ятлăхĕ хулпуççи çинче.
Çавраçилĕ килет те вĕçтерсе каять,
Ятсăр çыннăн ятсăрлăхĕ чунĕ тĕпĕнче.
Çынни ӳксе вилсен те, çумĕнчех юлать.

* * *

Манма пултарсан —
                                        манса кай
Кашни сăмаха,
кашни утăма
манма пултарсан —
                                        манса кай.
Анчах,
        паян мар,
        ыран мар.
Хам мансан,
манма пултарсан —
                                        манса кай.

## ĂШПИЛЛĔ ÇЕМĔ

Залра юхать ăшпиллĕ çемĕ,
Лăпкать пăлханчăк чĕрене.
Иртнĕ кунсен черчен илемĕ
Чуна ачашлĕ ĕмĕрне.

Ытарайми янрать шкул вальсĕ,
Хĕрсем çӳреççĕ ушкăнпа.
Пĕрин, ав, тухнă çут куççулĕ,
Тепри кулать ăш кулăпа.

Кунсем-çулсем, ак, иртнĕçемĕн
Килеп татах инçе çултан.
Залра çаплах янрать çав çемĕ —
Ăна манаймăн нихăçан.

## ШУХӐШЛАСА ТӐМӐТТӐМ

Сассӑм уҫӑ пулсассӑн,
Кӑмӑл лайӑх пулсассӑн,
Шухӑшласа тӑмӑттӑм,
Ҫӗнӗ юрӑ пуҫлӑттӑм.

Сассӑм уҫӑ пулмарӗ,
Кӑмӑл хавас пулмарӗ,
Юрласси те пулас ҫук.

Сӑнӑм хитре пулсассӑн,
Ялйыш сисмӗш пулсассӑн,
Шухӑшласа тӑмӑттӑм,
Хамах хирӗҫ пырӑттӑм.

Сӑнӑм хитре пулмарӗ,
Ялйыш сисмӗш пулмарӗ,
Хамах хирӗҫ пырас ҫук.

* * *

Ырӑ хыҫҫӑн кайсан —
Ырлӑх курӑн.

Усал хыҫҫӑн кайсан —
Хурлӑх курӑн.

Каях апла, каясах тесен,
Ырӑпа усала уйӑрма пӗлсен.

* * *

Такан тупрăм, ил-ха терĕм,
Такан — сана,
Йĕрĕ — мана.
Ырă курса пурăн терĕм,
Телей — сана,
Мĕлки — мана.

* * *

Хура çăхан, хура çăхан,
Шур хур чĕппине ан сăхлан.

Хура çăхан илтмест те.

Усал тăшман, усал тăшман,
Ман тус телейне ан сăхлан.

Усал тăшман илтмест те.

Шур хур чĕппи пурăннăшăн
Çăхан пурпĕр савăнас çук.

Ман тус-тăван телейĕшĕн
Тăшман пурпĕр савăнас çук.

* * *

Юрĕ-çке-ха, юрĕ,
Ан шиклен, чĕре.
Кам-ха мана курĕ
Ют уничере.

Шурă çурт хăпартăп
Шурă шухăшран.
Ют куçран хăратăп
Айăпăм пуртан.

Айăп айăп мар та —
Ячĕ лайăх мар.
Тантăш-хĕр-тăванăн
Упăшки ют мар.

Тĕлĕкре куратăп,
Ĕмĕтре шырап,
Хамран хам хăратăп,
Хамран хам тарап.

Шурă пӳрт лартасшăн
Ют уничере.
Пĕчченех пурнасшăн
Халĕ ку енче.

## ЭСЁ-И!

Тăхтасам-ха эсĕ, тăхтасам,
Ма тăратăн эсĕ ман умра?
Ман пекех эс уçă чунлă, каласам,
Эпĕ мар-и эс ачалăхра?

Мĕн пăхатăн эс? Мĕскер ыйтасшăн?
Тулчĕ-и сан тесшĕн ĕмĕтў?
Иртнĕ куншăн, иртнĕ пурнăçушăн
Çук-им тесшĕн санăн ўкĕнў?

Сан умра, чăнах та, пур пуль айăп,
Пулаймарăм, тен, эс кĕтнĕ пек.
Пурпĕрех, мĕнех ĕнтĕ калайăп...
Халлĕхе инçех кайман-çке эп.

Пурăнмалăх пур эс чĕртнĕ ĕмĕт.
Кăмăлпа кăшт хытрăм пулинех.
Ан шутла. Малашлăх манăн — ĕмĕр
Вараламăп сан ятна тинех.

Сывă пул, ытарайми ачалăх,
Май пулсан, татах эс килсе кур.
Кайран çитĕ, тен, хисеплĕ ватлăх,
Çамрăклăхпа килĕр. Сывă пул.

## ТУПМАЛЛИ


«Хисеп те кирлĕ...» . . . . . . . . 3
«Хăвалăхри хăва çинче çил çуралчĕ...» . . 4
Кимĕ тунсăхĕ . . . . . . . —
Чăвашла . . . . . . . . 5
«Эй, яра пар...» . . . . . . . . 6
«Тĕрĕсрен тĕрĕсне эп калатăп...» . . . . 7
«Тăнласам-ха эсĕ, тăнласам, тархасшăн...» . —
«Пӳлĕм тулли хурлăх пулчĕ...» . . . . 8
«Иккĕленсе пăлан тинкерчĕ...» . . . . . —
Çиллĕ çумăр . . . . . . . . 9
«Ултавлă лăпкă вырăна сăнатăп...» . . . . 10
«Тулса çитнĕ панулми...» . . . . . —
«Улшуç, ав, урампа утать...» . . . . . 11
«Ытла та канăçсăр ку шăплăх...» . . . . 12
«Çăвар уçнă-уçманах...» . . . . . —
Çепĕç кулă . . . . . . . . . 13
Инçетри юмах . . . . . . . . 14
«Юратăва, сыхлас тесе...» . . . . . 15
«Чĕкеç чĕлхи вăрăмăш...» . . . . . —
«Авăтать куккук, авăтать куккук...» . . . 16
«Вăхăтлăха тăратăп та хытса...» . . . . . —
Çитес çулшăн . . . . . . . . . 17
«Пурри — пурришĕн кулянать...» . . . . 18
Ахалех пит лайăх . . . . . . . —
Юрамасть юлма . . . . . . . . 19
Ыр курасса пĕлетĕп . . . . . . . 20
«Пĕрре шутлатăп...» . . . . . . . 21
Тăшманăма . . . . . . . . —
Самантлăха . . . . . . , . 22
«Сар чечексем çинчен калаççĕ тĕрлĕ...» . . 23

Ёмӗт ҫулӗ — уҫӑ . . . . . 23
«Шур кӑлканлӑ улӑхра...» . . . . . 24
«Калас сӑмах шартах хуҫӑлчӗ...» . . . . —
Асӑрхаттару . . . . . . . . 25
Ҫуркунне . . . . . . . . 26
«Ирӗклине ирӗк те — кӑвак инҫет...» . . . —
Кӑвайт ҫунать . . . . . . . . 27
«Чӗрем...» . . . . . . . . —
«Шур кӑлканлӑ улӑхра...» . . . . . 28
«Кашни каҫ...» . . . . . —
«Ҫунакан вутпуҫҫине...» . . . . . 29
«Хӗрнӗ хӑйӑр ҫинче...» . . . . . . —
«Шартламаччӗ, сивӗччӗ...» . . . . . 30
«Мӗскер куҫҫуль?..» . . . . . 31
Асамлӑ арча . . . . . . . . —
«Ҫуркунне ахӑлтатса кулать...» . . . . 32
«Кӗсменсӗр кимӗ юхрӗ...» . . . . . —
«Ҫынсем ҫынсен чунне кӗреҫҫӗ...» . . . 33
«Сывӑ-и эс, тусӑм, шур кӑлканлӑ улӑх...» . —
Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн . . . . . 34
«Хӑшпӗр ҫынсем шавах чееленеҫҫӗ...» . . . —
Ҫитмелле . . . . . . . . . 35
«Кӑтра пуҫлӑ сар ача» . . . . . 36
«Эп пӗрре те халӗ кӳренместӗп...» . . . . —
Аса ил . . . . . . . . . 37
«Шурӑ терӗҫ, шурӑ терӗҫ...» . . . . . —
«Хура тутӑр хурлӑн ӳкрӗ урайне...» . . . 38
«Ҫӗрсерен...» . . . . . . . —
Туслӑх пӳрчӗ . . . . . . . 39
Кам ӗненӗ? . . . . . . . . —
Эс пӗрех асра . . . . . . . 40
Мӗнле сыхланнӑ? . . . . . . . 41
«Эп, сан патна пырас тесе...» . . . . . 42
«Ҫич кунлӑх-и ҫич тӑван...» . . . . . —
«Кӗнеке хушшинче — шур кӑлкан...» . . . 43
Хӑратӑп . . . . . . . . . 44
«Эй, юрлаттӑн юррине!..» . . . . . —
«Утма ҫулӑм тайлӑк...» . . . . . . 45
Сивӗ ҫутӑ . . . . . . . . . 46
Шурӑ юр юрри . . . . . . . 47
Шанӑҫ . . . . . . . . . 48
Эсӗ — юрӑ . . . . . . . . —
«Пӗлтӗрхи юр пӗрчине...» . . . . . 49
«Эс аякра...» . . . . . . . —

«Юлташ та мар эс, тус та мар...» . . . . 50
«Эп тунӑ йӑнӑшсемшӗн...» . . . . . . —
«Хӗрлӗ ҫулӑм кӗрет хӗсӗнсе...» . . . . 51
«Иртнисене манра эс...» . . . . . —
«Хура Шурра калать...» . . . . 52
«Тӗрлӗ-тӗрлӗ шухӑшран...» . . . . . —
«Мӗнле апла?! . . . . . . . . . 53
«Калайман сӑмахна вулама...» . . . . —
«Эп — шӑплӑх» . . . . . . . .54
«Эп кӗркунне сӑнне илетӗп...» . . . . —
«Эс янра-ха, шухӑ-шухӑ юрӑ...» . . . . 55
«Ятлӑ ҫыннӑн ятлӑхӗ...» . . . . —
«Манма пултарсан...» . . . . . 56
Ӑшпиллӗ ҫемӗ . . . . . . —
Шухӑшласа тӑмӑттӑм . . . . . 57
«Ырӑ хыҫҫӑн кайсан...» . . . . . —
«Такан тупрӑм...» . . . . . . 58
«Хура ҫӑхан...» . . . . . —
«Юрӗ-ҫке-ха, юрӗ...» . . . . . . 59
Эсӗ-и? . . . . . . . . 60

Для старшего школьного возраста

**Любовь Васильевна Мартьянова**

**ПЕСНЯ БЕЛОГО СНЕГА**

**Стихи**

**На чувашском языке**

Редактор П. Е. Димитриев
Художник В. М. Ширшов
Художественный редактор Г. С. Самсонова
Технический редактор Л. Н. Кондрашкина
Корректор Н. П. Печникова

**ИБ 1773**

Сдано в набор 22.11.85. Подписано к печати 18.02.86. НТ 04226. Формат 70×90[1]/32. Бумага типографская № 2. Гарнитура журнальная рубленая. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,34. Усл. кр.-отт. 2,48. Учетно-изд. л. 2,05. Тираж 1500 экз.
Заказ № 4645. Изд. 85. Цена 10 коп.
Чувашское книжное издательство,
428000. Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, г. Чебоксары, проспект И. Яковлева, 15.

10 пус



Любовь Мартьянова Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Карапаш ялĕнче çуралнă. Октябрьскинче вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн пĕр хушă пир-авăр комбинатĕнче ĕçленĕ, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Ун хыççăн Патăръел районĕнчи Турхан ялĕнче шкулта учитель пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра «Тăван Атăл» журнал редакцийĕнче вăй хурать.

«Шурă юр юрри»— авторăн виççĕмĕш кĕнеки.

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ